

# Ĕçе çуран çӳрет



Проект ЧР Цифра министерстви пулăшнипе пурнăçланать

**Олег Георгиевич Пудаев çар тивĕçне 1980-1982 çулсенче Германире пурнăçланă. Риза хулинче иртнĕ унăн салтак çулĕсем. Вăл 1-мĕш танк çарĕн 9-мĕш танк дивизийĕнче тăнă, медицинăпа санитари батальонĕн водителĕ пулнă. Мускаринкассинче çуралнă, паянхи кун та кунтах пурăнать. Хальхи вăхăтра «Жилдорпутьснабжени» ОООра ĕçлет.**



О. Пудаев пĕрле службăра тăнă юлташĕсемпе

О. Пудаев архивĕнчи сăн ӳкерчĕксем




О. Пудаев

«Ишлей шкулĕнче 10 класс пĕтерсен çар комиссариатĕнчен автошкула водитель правине илме вĕренме ячĕç. Ун чухнех эпир пирĕн ушкăна Германие илсе каясси çинчен пĕлнĕ. Вĕренсе пĕтерсен водитель правине илтĕмĕр, хăшĕ-пĕри хушма категорисемпе экзаменсем патăмăр. 1980 çулта юпа уйăхĕн 12-мĕшĕнче повестка пачĕç», – пуçларĕ вăл салтак пурнăçĕ çинчен каласа пама. «Ушкăнра эпир нумайăйăнччĕ. Пире –18-19 çулти яшсенчен çуррине – малтан Канаша, унтан Хусана илсе кайрĕç – кунта çар чаçĕнче 10 кун пурăнтăмăр. Пире салтак çи-пуçне тăхăнтартрĕç, унтан самолетпа Германие вĕçсе çитрĕмĕр. Эпир пурте чăвашсем пулнă. Пирĕнтен камăн «В» категори пурри çинчен ыйтрĕç. Эпĕ алă çĕклерĕм. Мана пĕчченех штаб дивизине илсе кайрĕç, медикпа санитари батальонне служба ирттерме вырнаçтарчĕç, ытти чăвашсем унтах юлчĕç. Çапла эпĕ белоруçсемпе, украинсемпе, чеченсемпе, казахсемпе пĕрле служба ирттертĕм. Ишлей шкулне пĕрле çӳренĕ юлташ Олкаш ялĕнчи Василий Иванович Даниловпа пĕрле автошкулта пĕрле вĕреннĕ, пĕр вăхăтра салтака кайнă, пĕрлех Германие самолетпа вĕçсе çитнĕ, анчах унпа манăн уйрăлма тиврĕ. Çапах та икĕ çул хушшинче 2 хут тĕл пулма май килчĕ. Пĕрре вăл чирленипе пирĕн пата, медсанбата, лекнĕ чухне курнăçрăмăр. Тĕл пулсан асăнмалăх сăн ӳкерĕнтĕмĕр», – аса илчĕ вăл.

Олег Пудаев УАЗ-452 машинăпа чупнă. Аманнисене, чирлисене илсе çӳренĕ. Германире нумай çĕре çитнĕ, нумай хула курнă вăл. «Кам салтакра пулнă, служба тивĕçне пурнăçланă – пĕрремĕш çул йывăррине пĕлет. Апатне те çиес килет, çывăрас та килет, анчах пĕтĕмпе йĕркепе – пĕр вăхăтра çимелле, пĕр вăхăтра çывăрмалла. Малтанах хăнăхма йывăрччĕ», – пĕлтерчĕ вăл.

«Службăна çитсен присяга тытсанах пире винтовкăран пеме илсе кайрĕç, автоматпа виçĕ патрон пачĕç. Виççĕш те тĕл лекрĕç. Эпĕ унччен те шкулта çак енпе соревнованисене хутшăннă, вырăнсем йышăннă», – тăсăлчĕ малалла калаçу.

«Медикпа санитари батальонĕ пĕр вырăнта, казарма – штаб дивизи территорийĕнче вырнаçнă. Пирĕн кашни кун хула тăрăх унталла-кунталла 0,5 км çӳреме тивнĕ. Хамăр тĕллĕн çӳреме юраман, удостоверенипе кăна эпир хулана тухма пултарнă. Хули хитре, тирпейлĕ, çӳпçап урамра выртмасть, çӳпĕлемеççĕ те, кунта культурăллă çынсем пурăннинчен тĕлĕнеттĕм» – аса илчĕ вăл.

1982 çулта салтакран таврăнсан Олег Пудаев автошкула инструктора ĕçлеме вырнаçнă. Çамрăк ачасене вĕрентнĕ. «Ишлейри халăхăн çур пайне эпĕ вĕрентсе кăларнă», – тет вăл паянхи кун мăнаçлăн. Кунта вăл 1990 çулччен вăй хунă. Ун хыççăн тĕрлĕ çĕрте водительте ĕçленĕ. Пĕтĕмĕшле водитель стажĕ унăн – 43 çул.

«Халĕ юлашки çулсенче водитель пулма кăмăл çук, лăпкăрах ĕç кирлĕ. Манăн 3 машин пулнă, халĕ çуран çӳреме хăнăхрăм. Утни – пурнăçа вăрăмлатать, теççĕ тухтăрсем. Çавăнпа та эпĕ халĕ чылай чух çуран çӳреме тăрăшатăп. Хама çамрăк чухнехи пек туятăп вара. Машинăпа çӳренĕрен хырăм та ӳссе кайрĕ, ӳт хушрăм, халĕ вара 15 кг чакрăм», – кăмăлне уçрĕ вăл. Палăртмалла, Мускаринкассинчен хăйĕн ĕçне вăл кашни кун çуран утса çитет.

Çамрăк чухне Олег Пудаев 32 кг йывăрăш кире пуканне те, штанга та çĕкленĕ. «Ăмăртусене ятарласа хутшăнман, хама валли сывлăха çирĕплетме çеç. Эпĕ эрех-сăрапа иртĕхместĕп, чĕлĕм туртмастăп. Çамрăксене те сывă пурнăç йĕркине тытса пыма сĕнетĕп. Чылай чухне яшсем «симĕс çĕлен» ытамне лекнипе пурнăçран уйрăлаççĕ», – терĕ вăл.

Мăшăрĕпе Альбина Васильевнăпа пĕр ялтах çуралнă вĕсем, тăватă ача çитĕнтернĕ: виçĕ хĕрпе пĕр ывăл, халĕ вĕсен савăнăçĕ – 3 мăнук. Асли Мускавра пурăнать, вăталăххи – Шупашкарта, кĕçĕнни – Германинче, нимĕç каччипе çемье çавăрнă. «Малтан пандемине пула, унтан Украинăра ятарлă çар операцийĕ пуçланнăран пирĕн пата килеймерĕç. Тепĕр çул, май пулсан, хăнана килме палăртаççĕ. Хамăр та Германие каяс шухăшлă. Мана хĕр эпĕ ăçта служба ирттернĕ çавăнта илсе кайма шантарчĕ. Çак маншăн пысăк парне пулĕ», – чунне уçрĕ вăл.

Çар ветеранĕсем йĕркелекен мероприятисене те çӳрет Олег Пудаев – ГСВГра службăра пулнă салтаксемпе пĕрле стройпа утать, паянхи кун та юлташсем пĕр-пĕринпе çыхăну тытса тăраççĕ. «Николай Ивановпа, Василий Даниловпа, Анатолий Медяковпа час-часах курнăçатпăр. Çĕртме уйăхĕн 9-мĕшĕнче, оккупациленĕ совет çарĕсен Германири ушкăнĕ йĕркеленнĕ кун, тата çурла уйăхĕн 31-мĕшĕнче, совет çарĕсене Хĕвел анăçри çĕршывсенчен пĕтĕмпех илсе тухнă кун, пурте пĕрле Çар мухтавĕн монуменчĕ патне пуçтарăнатпăр. Çавăн пекех кашни çул çурла уйăхĕн пĕрремĕш шăматкунĕнче Вăрнар округĕнчи Шинерте спорт уявне ирттеретпĕр. Волейболла выляссинче, пăшалтан перессинче тата ытти спорт тĕсĕсенче вăй виçетпĕр. Кашни çул утă уйăхĕнче пĕр-пĕр округра ГСВГ ветеранĕсем хушшинче спартакиада ирттеретпĕр. Кăçал Елчĕкре пулчĕ. Мускаринкассинчен эпĕ пĕччен мар, эпир ГСВГра улттăн служба ирттернĕ: Анатолий Львович Саракеев, Валерий Изосимович Мясников, Алексей Валерьянович Макаров, Владислав Михайлович Пудаев (**ред.**: Олег Георгиевичăн иккĕмĕш сыпăкри шăллĕ), Николай Арсентьевич Арланов – шел пулин те, пирĕнтен уйрăлса кайрĕ. Халĕ пиллĕкĕн юлтăмăр. Кашни тĕлпулăва пĕрле çӳретпĕр. Çĕнтерӳ кунĕн парадне те хутшăнатпăр», – терĕ вăл.

Олег Пудаевăн ГСВГ ветеранĕн удостоверенийĕ пур, вăл «ГСВГра служба ирттернĕшĕн», «Автомобиль çарĕсен ветеранĕ» медальсене тивĕçнĕ.

Олег Пудаев çамрăк чухне икĕ ача пурнăçне çăлса хăварнине те палăртмалла: пĕрне шывран, теприне шыв тĕпĕнчен туртса кăларнă. «Манăн овчарка пурччĕ, вăл ман тавра сиккелет те сиккелет, шыва кĕрес килет пулĕ тесе пĕве хĕрне антăмăр. Тăруках эпĕ икĕ ача шывра путнине асăрхарăм. Тӳрех пулăшма чупрăм. Пĕрне çăлтăм, теприкурăнмасть, шыв тĕпĕнче шырама тытăнтăм, хамăн вăй пĕтнĕ, çапах тупрăм, çыран хĕррине кăлартăм. Васкавлă пулăшу чĕнтĕм, тухтăрсем ачасен пурнăçне çăлса хăварчĕç», – аса илчĕ Олег Георгиевич.

Пурнăçра Олег Пудаев çак 5 правилăна пăхăнать:

1. **Пулăшу ыйтсан çынран пăрăнмалла мар.**
2. **Сывă пурнăç йĕркине тытса пымалла.**
3. **Çемьере те, ĕçре те, пурнăçра та лайăх енсене хăвăн кăтартмалла.**
4. **Никампа та хирĕçмелле мар, килĕшӳллĕ пурăнмалла.**
5. **Çамрăк ăрăва тĕрĕс çул çине тăратасси – аслисен тивĕçĕ.**

**Юлия ИВАНОВА**

ПУЛĂМ



Г. Пучкован мăнукĕ Леонид присяга панă самант

# Çамрăк кадетсем тупа турĕç

**Л.В. Пучков ячĕллĕ Чăрăшкасси шкулĕнче çулсеренех авăн уйăхĕн 16-мĕшĕнче паттăр ентеше асăнса çарпа спорт мероприятийĕсем иртеççĕ.**

Леонид Валериевич Пучков Чечен Республикинче пуç хунăранпа вунă çул çитрĕ. Çак кун ăна асăнса шкулта кадетсен полици класне уçрĕç. Асăннă мероприятие сумлă хăна чылай хутшăнчĕ. Вĕсен йышĕнче Мускаври Раççей ШĔМĕн академийĕн преподавателĕ, отставкăри полици полковникĕ, наукăсен докторĕ Федор Васильев, Шупашкарти 1-мĕш полици уйрăмĕн пуçлăхĕ, полици подполковникĕ Александр Федоров, Раççей ШĔМĕн Шупашкар районĕнчи уйрăмĕн пуçлăх çумĕ, полици подполковникĕ Антон Комиссаров, Шупашкар муниципалитет округ администрацийĕн вĕрентӳ, спорт тата çамрăксен политикин физкультурăпа спорт секторĕн ертӳçин тивĕçĕсене пурнăçлакан Екатерина Антонова, çавăн пекех Леонид Пучковăн амăшĕ Галина Александровна тата аппăшĕ Елена Валериевна тата ыт.те пулчĕç.

2020, 2022 çулхи кадет класĕсенчен вĕренсе тухнисем те мероприятие хутшăнчĕç, сăмах каларĕç. Çавăн пекех вĕсем çамрăксене ăнăçу сунчĕç.

Çамрăк кадетсем тупа тунă хыççăн Галина Пучкова пурне те ăшшăн тав турĕ, 2-3-мĕш класра вĕренекенсене, кадет ятне тивĕçнисене, саламларĕ. Хăйĕн Леонид Пучков тата Кирилл Алангов мăнукĕсемшĕн савăннине пытармарĕ вăл. Кадетсем малашне тата та тăрăшарах вĕренме, çĕршыва юрăхлă çынсем пулма тăрăшнине пĕлтерчĕç. Юлашкинчен ачасем хăйсен пĕлĕвне тĕрлĕ ăмăртура тĕрĕслерĕç, хăнасенчен хаклă парнесем тивĕçрĕç.

**Алина НИКОЛАЕВА,**
**чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен**